Лару-тăру

Ансат мар истори

Мĕншĕн Муркаш район пуçлăхĕн çумне вăхăтлăха должноçран хăтарнă?

Муркаш районĕнчи сăмах тăвакансем каçса кайсах харкашуллă хыпара сÿтсе яваççĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне - ял хуçалăх управленийĕн ертÿçине Альберт Николаевич Иванова вăхăтлăха хăйĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă! Çакăн пек йышăну тунă вырăнти судья.

Альберт Николаевич калану тăрăх, суд тарасин чашăкĕсем çине унăн, саккуна пурнăçлакан гражданинăн тата ертÿçĕн ырă ятне хунă, çавăнпа вăл хăйне варалакансемпе вĕçне çитиччен кĕрешĕ. “Республика органĕсен объективлăхĕ çине шанса тăратăп – вĕсен тĕрĕслĕхе тупса палăртмалла тата вырăнти прокуратурăн ĕçчен сотрудникĕсене тата район сыпăкĕн федераллă судйине Раççей законодательствине дипломлă юристсен çапла пăсма юраманнине кăтармалла”,- çакăн пек унăн позицийĕ.

Альберт Николаевич - 9367 номерлĕ уголовнăй ĕçпе тĕп айăпланакан. Малтанхи следстви ĕçĕсем 2007 çулхи май уйăхĕнче официаллă “старт” илнĕ, уйăхсем(!) иртсен район прокуратурин аслă следователĕ Тарасов ертÿçĕ “преступлени тунине куракансем” çине витĕм кÿрет тесе шутлать. Право сыхлавĕн органĕсене тата районăн хастар прокуратурине чиновник хăратса е укçа парса çавăрма тăрăшнă граждансенчен пĕр заявлени те килменни нимех те мар. “МК” в Чебоксарах” иртнĕ çул пулса иртнĕ ĕçсен хронологине куç умне кăларчĕ.

2006 çулхи май уйăхĕ – “Сеятель” СХПК район администрацийĕ поручитель пулнипе çурхи уй-хир ĕçĕсене ирттерме банкран кредит илнĕ. Пурлăхне, çав шултра сыснасене тата мăйракаллă шултра выльăха салука хывнă, çавăнпа вĕсене аяккалла никама та пама юраман. Анчах СХПК председателĕ Соловьев кооперативри 700 сыснана... хăйне панă! Тĕрĕсрех каласан, хăйĕн уйрăм хуçалăхне – “Агросоюз” ОООна. 120 пуç мăйракаллă шултра выльăха тепĕр частника – “Хлебороб” ООО хуçине - арендăна панă.

2006 çулхи июль уйăхĕ – “Сеятель” СХПК кооператив членĕсен пĕрлехи пухăвĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - ял хуçалăх управленийĕн ертÿçи Иванов хресченсене вĕсен ертÿçи саккуна хирĕçле ĕçсем тунине ăнлантарса панă. Çав шултра выльăх-чĕрлĕхе “Агросоюз” хуçине харпăрлăха панине те. Федераллă саккунсемпе сыснасене, мăйракаллă шултра выльăха тата коллективлă хуçалăхăн çурт-йĕрне çапла сĕмĕсĕррĕн “приватизацитума юраманнине те.

Пĕр шухăш патне таврăнăпăр. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Иванов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Владислав Данилов тата депутатсен районти Пухăвĕн ертÿçи Игорь Николаев Чăваш Енĕпе ĕçлекен Тĕп федераллă инспектор Руслан Тихонов тата республика прокурорĕ Владимир Метелин патне вăй илнĕ конфликта уçăмлăх кĕртме çырупа тухнă. Вĕсемшĕн нумайăшĕ ăнланмалла мар. Район прокуратурин аслă следователĕ Тарасов патне тăратнă СХПК-ан пĕрлехи пухăвĕн протоколĕн оригиналне мĕншĕн халĕ те уголовнăй ĕçе явăçтарман? Çак документ чăн пулнине пухура пулнă официаллă çынсем çирĕплетме пултараççĕ-çке. Заявительсем аптăраса тăраççĕ – следователь тата уголовнăй ĕçĕн тĕп свидетелĕ Соловьев... Иванова хăйне пуху протоколне подделка тума тăрăшнă тесе айăплама хăтланаççĕ. Вырăнти прокуратура тата милици сыщикĕсем район администрацийĕ (уйрăм чиновник мар) темиçе хутчен СХПК председателĕн Соловьевăн ĕçĕсене пăхса тухма чĕнсе каланине тĕлĕнмелле шута хуманнине вĕсем ăнланма пултараймаççĕ. “Хальхи вăхăтра “Сеятель” СХПК-ан финанспа хуçалăх ĕçĕсене ревизи тăвассине тата А.Ю. Соловьев туни правăна тивĕçтернине тĕрĕслессине прокуратура хушнипе чарса лартнă”- Чăваш Енĕпе ĕçлекен Тĕп федераллă инспектор Руслан Тихонов тата республика прокурорĕ Владимир Метелин патне çырнинчен.

Апла пулсан чиновника мĕншĕн айăпласшăн? Конфликтăн активлă фази 2006 çулхи апрельпе август хушшинчи тапхăра лекнĕ. Çулталăк иртсен(!) СХПК-ан “хĕсĕрленĕ” председателĕ (совместительство йĕркипе ял хуçалăх предприятийĕн хуçи те) сасартăк уголовнăй майпа ответ тыттармалли тĕслĕха аса илнĕ: Альберт Иванов ăна административлă майпа хаяррăн тавăрассипе хăратнă иккен, çапла вара хăюсăр Соловьев хаяр чиновника ахалех 10750 тенкĕ тăракан “Ковбой” гербицида пилĕк литр парса янă. Темшĕн вăл вырăнти саккун хуралçисене шута хуман. Çулталăк иртсен кăна “ковбой” историне аса илнĕ, район прокуратурине заявлени çырса панă.

Следователĕн преступлени тунине куракансем пур та ĕнтĕ. Акă ялти пĕр çын, вăйлă астуса юлаканскер тата музыка сассине çивĕччĕн туяканскер пулас, çулталăка яхăн вăхăт иртсен те Соловьев патне такам шăнкравланине тата темĕн ыйтнине аса илнĕ. Свидетель калану тăрăх, ку Альберт Николаевич пулнă – палламан çыннăн сасси Иванов тембрĕ пекех туйăннă! Мĕнле майпа Соловьев должноçре тăракан “маттура” пилĕк литр гербицид парса янă-ха? Çур литр мар-çке, кĕсйере пытарайман. Питех те ансат пулнă иккен. Çулталăк каялла СХПК-ан председателĕ тата тĕп бухгалтерĕ район центрне килнĕ. Водителĕ питех те сапаланчăк çын пулас, енчен те салон алăкĕсене питĕрме маннă пулсан. Вăт çавăн чухне машинăран такам пилĕк литр “Ковбой” илсе кайнă. Мĕншĕн çакна шăпах Иванов тунă-ха? Вăрттăн аноним хаçат хучĕн татăкĕ çине расписка хăварнă, СХПК правленийĕнчи çивĕч куçлă хĕрарăм тÿрех курнă -–ку район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн подписĕ. Шел, следствишĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ улика уголовнăй ĕçе явăçтарайман - çав сапаланчăк автомобилист Соловьевах çăмăл автомашинăна сутнă чухне “манса кайнипе” бардачокра çак пĕлтерĕшлĕ уликăна хăварнă. Çапла вара çирĕплетме пулăшакан япала тю-тю...

Сăмах май каласан, “Альфа-ГАЗ” ЗАО-н генеральнăй директорĕ Ярынкин фирма пичетне пусса çирĕплетнĕ справка та пур. Унта “Ковбой” препаратăн рынокри вăтам хакĕ 2006 çулта пĕр литршăн 792 тенкĕ (НДС-а шута илсен) пулнине калану. Апла пулсан, сăмах виçĕ хут пĕчĕкрех сумма пирки пырать? Анчах “Альфа-ГАЗ” ЗАО Фемида ĕçченĕсене тăратнă справкăна шута илмен, суд решенийĕнче çаплипех 10 пин те 750 тенкĕ тăрать.

Сирĕншĕн кулăшла, Иванова вара хаваслă мар. Çакăн пек “доказательствăсемпе” никĕслесе вырăнти прокуратура ăна район шайĕнчи чун иллисен шутне кĕртме хăтланать. Айăпланаканăн “личнăй ĕçне” тишкерме оперативлă следстви ушкăнĕ йĕркеленине урăх мĕнле хаклама пулатьха. Ăна çав аслă следователь Михаил Тарасов ертсе пырать. “Патшалăх куçĕн” сыхă салтакĕсем 1998 çулта вĕсен “объекчĕ” саккунсăр майпа хваттер илнине асăрханă. Анчах сыщиксем тĕл тивертеймен – вĕсем айăплакана 2000 çултах Чăваш Ен шалти ĕçсен министерствин экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен Управленийĕ тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Хваттер илнĕ чухне вăл йĕркене пăсман тесе начальствăна пĕлтернĕ. Тарасовшăн “малашлăхлă” тĕпчеве Чăваш Ен Минстрой специалисчĕсем юлашки пăтана çапса кĕртсе лартнă - вĕсем Ивановсен çемйине субсиди уйăрнине тепĕр хут тĕрĕсленĕ тата çакна палăртнă: пурте çав тапхăрта вăйра тăнă саккунсемпе тата нормативлă документсемпе çирĕппĕн килĕшсе тăрать.

Вара Иванов тăшманĕсем тĕп калибрлă тупăсенчен “кĕмсĕртеттернĕ” - вĕсем Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров, республика прокурорĕ, ФСБ (çапла çырнă **– Автор**) директорĕ тата МВД министрĕ ячĕпе çыру çырнă. Ултăшĕ районти предприятисен ертÿçисем тесе палăртнă, вĕсенчен хăшне-пĕрне вăл вăхăта СХПК коллективĕсем должноçран хăтарнă пулнă ĕнтĕ. Питех те ответлă айăплав, çавăнпа ЧР Президенчĕ ял хуçалăх министрне Михаил Игнатьева конфликта уçăмлăх кĕртме хушнă. 2007 çулхи апрель уйăхĕнче вăл Николай Васильевича çырупа çырса ведомство тĕрĕслевĕн результачĕсем çинчен пĕлтернĕ. 31 ертÿçĕ хутшăннипе районти производство канашлăвĕ иртнĕ. Министр Президента тĕрĕслев результачĕсене пĕлтернĕ: Соловьев господина СХПК пурлăхне кооператив членĕсен решенийĕсемсĕр хăй йĕркеленĕ предприятие пама юраманнине пĕрре мар асăрхаттарнă. “Агросоюз” ООО кооператив пайщикĕсен тивĕçлĕ решенийĕсемсĕр СХПК-ан çурчĕсемпе, ферма сооруженийĕсемпе, апатçимĕçĕпе, энергоресурсĕсемпе усă курнине кăтартнă. Районти канашлăва хутшăнакансем (вĕсенчен нумайăшĕ ял хуçалăх предприятийĕсене ертсе пыраççĕ) Иванов вĕсен предприятийĕсен устав капиталĕнче пурлăх тÿпине тытса илесшĕн пулнă текен шухăш тĕрĕс маррине кăтартса панă. Михаил Игнатьев палăртнă, канашлăва хутшăнакансенчен ытларахăшĕ “Сеятель” СХПК председателĕн Соловьевăн тÿрĕ кăмăллă мар политикине хирĕçлесе калану. Çырнă çăхав авторĕсенчен пĕри В. Кондратьев та çылăхсăр мар иккен – служба вырăнĕпе йĕркесĕр усă курнăшăн ăна суд туса ирĕкрен хăтарнă. Рудаков господина вара Андреев ячĕллĕ ял хуçалăх кооперативĕн членĕсем председатель кабинетне пушатма ыйтнă. Апла пулсан, жалоба çуралнин сăлтавĕсем - тавăрас тени тата должноçри çынна варалама хăтланни. Апла пулсан, кооператив харпăрлăхне “прихватизацилеме” тăрăшнине Иванов чарса лартассишĕн çине тăни такам кăмăлне кайман?

“ Район прокуратурин тата судăн уйрăм сотрудникĕсен логики мана тĕлĕнерсе ярать,- палăртать Чăваш Ен адвокатсен палатин вице-президенчĕ Алимжан Абубикеров. – Маншăн вырăнти Фемида ĕçченĕн логики ăнланмалла мар. Хÿтĕлекен енĕн ĕненÿллĕ шухăшĕсене вăл чăнласа йышăнман пек туйăнать. Судья процесс пуçланиччченех решени йышăннă текен ăссăр шухăша ĕненес килмест”.

...Чăваш Ен Шалти ĕçсен министерствин экономика преступленийĕсемпе кĕрешекен Управлени ертÿçи Валерий Плотников полковник журналистсемпе анчахрах тĕл пулсан Муркаш районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсене рейдерсем тытса илме хăтланнине унăн сотрудникĕсем чарса лартнине каласа пачĕ. Бизнесменсем (Чăвашран çеç мар) тахçанах кунти çĕрсем çине куç хывнă. Район урлă федераллă трасса каçса каять, çул çывăхĕнчи çĕр лаптăкĕсене тепĕр хут сутса пысăк укçа тума пулать. Çакна тума ял хуçалăх предприятийĕсене юхăнтарса ямалла та уйрăм çын предприятине куçармалла. Шанчăклă чиновниксем пулăшнипе куç хывнă çĕрсене ял хуçалăх çаврăнăшĕнчен кăлармалли çеç юлать. Финанс схемине “çу сĕрме” ял хуçалăх предприятийĕсен çураçакан председателĕсене суйласа илмелле тата саккуна хăйсен интересĕсенчен çÿлерех хуракан чиновниксене нейтрализацилемелле. Кам вара вĕсемпе мар – вăл вĕсене хирĕç...

Ун чухне федераллă трасса çывăхĕнче чаплă гостиницăсем, мотельсем, АЗС-сем тата ресторансем туса лартма пулать. Юхăнтарнă ферма вырăнĕнче хăрушă хими продукцийĕ кăларакан минизавод лартма юрать? Объект халăх пурăнакан пысăк пунктсенчен аякра пулĕ, экологсем кун пек чухне пысăк шав та çĕклес çук. Вырăнти влаç вара вăл вăхăта “кĕске пăявра” пулĕ.

Антон СЕРГАЧЕВ.

P.S. Уголовнăй преступлени тунă тесе айăпланакан Альберт Иванов сакун хуралĕнче тăракансенчен çакна кăна ыйтать – Чăваш Ен прокуратурин 9367 номерлĕ уголовнăй ĕçе районтан илмелле те хăйсене тĕллĕн тĕпчемелле.

“МК” в Чебоксарах” хаçат, июлĕн 17- 24-мĕшĕсем.

Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру

Тимлĕх кашниншĕн малта пулмалла

Çу вăхăчĕн шăрăх кунĕсем тăраççĕ. Хушăран çăвакан çумăрсем те хĕрÿллĕхе чакарайманран граждансен çак тапхăр чрезвычайлă лару-тăрусемпе çывăх тăнине те манма кирлĕ мар. Çакăн çине самантлăха алă сулсан вара...

Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕ çу вăхăтĕнче пулса иртекен инкексене тишкернĕ май ашшĕ-амăшĕсемпе шкул ачисене тата яшсемпе хĕрсене шăрăх çанталăкра уйрăмах тимлĕ пулмалли пирки тепĕр хут асăрхаттарать. Çакна валли сăлтавĕсем те пур.

Халăх каларăшне пурте пĕлетпĕр: вăрăран юлать те çулăм тĕппипех пуçтарса каять. Мĕн-ха вăл 30 градуслă е ытларах та шăрăх çанталăкри пушар? Кунта этеме пăхăнман çулăм патне пыма мар, ун пирки шутлама та хăрушă. Çав вăхăтрах районта çулталăк пуçланнăранпа 24 пушар алхасрĕ (пĕлтĕр – 30), ĕмĕрпе пуçтарнă миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕл пулса вĕçрĕ. Çулăмра этем пурнăçĕ татăлнă тĕслĕхсем те пĕрре мар пулчĕç: 6 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пĕтĕмĕшле пушарсен пĕр пайĕ ачасем шăрпăкпа вылянипе тухни аслисене çу кунĕсенче тимлĕхе ÿстерме, ачасемпе ăнлантару калаçăвĕсем ирттерме ыйтать. Кунпа пĕрлех аслисен хăйсен те ÿсĕр пуçпа пирус туртса “хĕрлĕ автана” йыхравлассинчен пăрăнасси пирки, электрохуçалăха юсавлă тытасси, газ приборĕсемпе асăрхануллă пуласси çинчен самантлăха та манма юрамасть.

Ăшă та типĕ çанталăкра хурт-кăпшанкă, шăна-пăван, тĕрлĕрен микробсемпе бактерисем хăвăрт аталанаççĕ. Вĕсен пуçарăвĕпе кирек-хăçан та, кирек камăн та хăвăрт сарăлакан вар-хырăм чирĕсем пуçланма пултараççĕ. Çавна май апат-çимĕçпе усă курнă чух санитарипе гигиена йĕркисене çирĕп пăхăнасси паян кун йĕркинче малти вырăнта тăрать.

Тата тепĕр асăрхаттару – шыва кĕнĕ чух асăрхануллă пуласси. Шăрăх çанталăкра шыва кĕрсе ÿт-тире уçăлтарасси – кăмăллă пулăм. Уйрăмах ачасем килĕштереççĕ çак ырлăха. Шыв вăл пурнăç, вăл пĕтĕм сывлăха çирĕплетет. Анчах тĕрĕс тытатпăр-и-ха эпир хамăра шыв çинче? Шывăн туратти çук тенине манмастпăр-и-ха? Кунта статистика çакна çирĕплетет, 2000 çулта район территоринче шыва кайса вилнĕ 6 тĕслĕх пулнă пулсан, хыççăнхи çулсенче те вăл чакни курăнмасть: 2001 çулта – 5 тĕслĕх, 2002 çулта – 12 тĕслĕх, 2003 çулта – 6 тĕслĕх, 2004 çулта – 10 тĕслĕх, 2005 çулта – 4 тĕслĕх, 2006 çулта – 10 тĕслĕх. Кăçалхи çу кунĕсем те ку тĕлĕшпе “таса” курăнмаççĕ. Иртнĕ кунсенче район территоринче 2 çын шыва кайса пурнăçран уйрăлчĕ. Юлашки тĕслĕх июлĕн 12-мĕшĕнче Турай ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пулса иртрĕ. Çак инкексен сăлтавĕсене пĕтĕмлетсен çакă курăнать: аслисем эрех-сăрапа туслă пулнипе, ачасем аслисемсĕр шыва кĕнипе инкеке лекнĕ. Çавăнпа та шыва кĕнĕ чух яланах хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмалла. Вĕсем:

– шыва кĕме пĕччен ан çÿре;

– нумай вăхăт хĕвел çинче пулнă хыççăн, ĕçлесе ывăнсан тата апат çинĕ хыççăн тÿрех шыва кĕме юрамасть;

– вăйлă çиллĕ тата аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче шыва кĕни вырăнсăр;

– пĕлмен юханшывра, никам та е нихăçан та кĕмен вырăнта шыва кĕме, çырантан сикме е чăмма юрамасть;

– сивĕ шывра нумай вăхăт хушши пулма юрамасть;

– пĕчĕк ачасене çыран хĕрне пĕччен ярас марччĕ, вĕсем шыва кĕнĕ чух та аслисен пĕрле пуласчĕ.

Çак йĕркесене пăхăнсан шыв çинче те хăрушлăхран пăрăнса иртме пулĕ. Çу кунĕсем те ыррипе кăна нумайлăха асра юлĕç.

Н. МИЛЮТИН,
район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн пуçлăхĕ.

Вулакан пултарулăхĕ

Асатте

Ман юратнă асатте
Пурăнать Шуркассинче.
Пулнă Аслă вăрçăра,
Халь тивĕçлĕ канура.

Кашни çул вăл çырăнать
«Хыпар» ятлă хаçата.
Мĕнле вăхăт тупăнать -
Хаçат унăн алăра.

-Хыпарта нумай канаш,
Пĕчĕклех унпа туслаш,
Ыррине çеç вĕрентет,-
Асатте мана сĕнет.

Эп итлетĕп ват çынна,
Алла тытрăм хаçата.
Чăн, нумай çĕнни кунта,
Пулăшать хушма ăсна.

«Хыпара» сунап ыр çул,
Тухтăр вăл тата 100 çул.
Кашни кил унпа
туслаштăр,
Кашни çын савса вулатăр.

А. ТЮРИН.